Технологи картти (тĕслĕх)

«Тăван кĕтес. Тăван çĕр шыв» раздел

Урок теми «Залив хĕрринче»

Урок тĕсĕ: çĕнĕ пĕлӳ илмелли хутăш урок.

Урок тĕллевĕ: *ăçта? Юман мĕнпе ярăнать? Эсĕ ăçта каятăн?* ыйтусемпе паллашасси, *залив хĕрринче, эпĕ киле каятăп* сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсемпе паллашасси; çĕнĕ сăмах майлашăвĕсене пуплеве кĕртесси; *залив хĕрринче* сăмахсен сасă моделĕсемпе паллашасси.

Пулмалли результатсем:

Харкамлăх (личностные) результачĕсем - калаçас, ыттисене тăнласа итлес пултарулăх аталанни; тимлĕх калăпăшĕ, пахалăхĕ, самантлăх, ятарлă тата ирĕклĕ астăвăмĕ аталанни; сывлăхшăн тĕрĕс канмалли çинчен пĕлни; татах та нумайрах пĕлес туйăм çурални, аталанни; çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарни, ИКТ-технологипе (наушниксемпе, дискпа) усă курма пултарни.

Пĕлӳлĕх (познавательные) результачĕсем - *Эсĕ залив хĕрринче мĕн тăватăн? Ачасем залив хĕрринче мĕн тăваççĕ? Ачасем ăçта? Юман мĕнпе ярăнать?* ыйтусене хуравлама вĕренни; пуплевре *Эс ăçта каятăн? Эп шкула каятăп* евĕрлĕ предложенисемпе, *ку, ярăнатăп, çапла, çук* сăмахсемпе усă курни, таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлу аталанни; япаласене астуса юлас, аса илес хăнăхусем çивĕчленни; пусăм, сасă схемисемпе, моделĕсемпе ĕçлеме вĕренни; Шупашкарти *Анне палăкĕ* паллă вырăнпа паллашни.

Хутшăну (коммуникативные) результачĕсем – вĕрентекен информацине ăнланса кĕске хуравсем пама хăнăхасси, „Залив хĕрринче“ тема тăрăх çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама хăнăхни; *ăçта?* ыйтăва тĕрĕс хуравлама хăнăхни; калаçăва хутшăнма, çыхăнуллă, ăнланмалла каласа пама тарăшни; чăвашла çыхăнуллă пуплеве аталантарни; шухăшлав мелĕсемпе усă курма пĕлни; ыттисене ăнланмалла кĕскен калама, ыйту пама пултарни; учитель, юлташĕсем каланине итлеме пултарни; калаçнă-хутшăннă чухне пĕр-пĕрне хисеплени.

Йĕркелӳ (регулятивные) результачĕсем - хăйĕн ĕçне сăнаса-асăрхаса пыма пултарайни; хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышăнни; кашни çыннăн хăйĕн умне яланах мĕнле те пулин тĕллев лартмаллине ăнланни; ĕçе мĕншĕн, мĕнле тĕллевпе тунине ăнланни; япала, ӳкерчĕк тăрăх мĕнле йĕркепе каламаллине пĕлни; сăмахсене хусканусем туса палăртнине ăнланасси; вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курма вĕренни.

Технологисем: вăйă, ушкăнпа вĕренни, пĕрле ĕçлесе вĕренни, «критикăллă» шухăшлава аталантарасси, сывлăха упрасси, информаципе хутшăну, сывлăха упракан, харпăрлăха аталантаракан, ушкăнра хутшăнса ĕçлеме хăнăхтаракан технологисем.

Ĕç мелĕсемпе меслечĕсем: ыйту-хурав, учитель сăмахĕ, калаçу, шырав-тĕпчев, çурма сасăпа, саспа вуласси, вăйă меслечĕ, рефлекси мелĕ, проблемăллă ыйтăва тăратни, илемлĕ вулав, мăшăрсенче, ушкăнсенче ĕçлесси, диалог, монолог тăвасси, словарь ĕçĕ, тема тăрăх калаçу ирттерессси; ыйтусем çине хурав тупма вĕренесси; кĕвĕ итлени, шыравпа танлаштару, наушникпа ĕçлесси.

Пуплев хăнăхăвĕсем: сăмах йышне пуянлатасси, çĕнĕ сăмахсемпе усă курса çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, текстпа тĕрĕс ĕçлеме, сăмахсене ушкăнлама хăнăхтарасси, пĕр-пĕрне ыйтусем парас, хуравлас хăнăхусене аталантарасси.

Ĕç хатĕрĕсем: компьютер, проектор, интерактивлă доска, вĕренӳ кĕнеки, смайликсем, наушник, диск.

Урок юхăмĕ

Урок юхăмĕ	**Мелпе меслетсем**	**Вĕрентекен ĕçĕ**	**Ачасен ĕçĕ**					
			пĕлӳлĕх результачĕсем		**хутшăну результачĕсем**		**йĕркелӳ результачĕсем**	
			пурнăçлакан ĕçсем	*ĕçе йĕркелемелли майсем*	*пурнăçлакан ĕçсем*	*ĕçе йĕркелемелли майсем*	*пурнăçлакан ĕçсем*	*ĕçе йĕркелемелли майсем*
Йĕркелӳ саманчĕ (класа йĕркелени)	**Сывлăх сунма вĕрентни, урокра чăвашла калаçма çăмăлрах пултăр тесе фонетика зарядки туса ирттерни**	Урока йĕркелесе ярать, класра туслă ĕçлессине йĕркелет.	Чăвашла сывлăх сунаççĕ.	Кашни учителĕн хăйĕн майĕ, вăрттăнлăхĕ пур	Ачасем вĕрентекене чăвашла сывлăх сунаççĕ, сăвă каласа пĕр-пĕрне саламлаççĕ (е урăх майпа)	Пĕр-пĕрин çине кулса пăхса илни	Чăвашла сăмахсене калаççĕ	Фонетика зарядкине хапăлласах туни
	Пуплеве хăнăхтарни (çанталăка сăнлани)	Малтан çанталăка сăнласа пама ыйтни, ун хыççăн экран çинчи ӳкерчĕксем тăрăх калаçу йĕркелени– *Халь хĕлле-и? Çуркунне-и?* *– Паян урамра ăшă-и? Сивĕ-и?* *– Урамра хĕвел пăхать-и? Пăхмасть-и?* *– Урамра çумăр çăвать-и? Çумасть-и?* *– Урамра юр çăвать-и? Çумасть-и?* *– Çил вĕрет-и? Вĕрмест-и?*	Паянхи çанталăка сăнлаççĕ, çанталăк паллисемпе пулăмĕсем çинчен мĕн пĕлнине черетпе каласа параççĕ	Çут çанталăка сăнама, ун илемĕпе киленме пĕлни	Экран çинчи ӳкерчĕксем тăрăх ачасем черетпе калаççĕ	Иккĕн (пĕр-пĕрне итлеме, илтме вĕренсе) калаçу йĕркелеме пултарни	Калаçăва хутшăнаççĕ, çыхăнуллă, итлекенсем ăнланмалла каласа пама вĕренеççĕ	Сăнанине ушкăнпа пĕтĕмлетӳ туни

Малтан вĕреннине аса илни	**Малтанхи уроксенче вĕреннине аса илни. Аса илмелли сăмахсем: хускану ту, шыва кĕр, чуп, уçăлса çӳре, скейтпа ярăн, пылак пăр çи, сĕткен ĕç, пулă тыт, ӳкер, волейболла выля.**	1. Шут хисепĕсене аса илнине йĕркелет. 2. 20 таран шутлама хăнăхтарать. 2. Кун ячĕсене аса илтерет.	Ачасем 20 таран шутласа параççĕ, кун ячĕсене аса илеççĕ	Хуравлас хăнăхусене аталантарни. Хуравлани.	Пĕри ыйтни, тепри хуравлани	Пĕрин хыççăн тепри ĕçлени	Ачасем йĕркипе сăмах хушса пырса предложенисем йĕркелеççĕ	Хăйсен кун йĕркине йĕркелеме хăнăхасси
		Хуравлас хăнăхусене аталантарать. «Атăл хĕрринче» темăри ĕç-хĕле пĕлтерекен сăмахсене аса илтерет. «Ăнлан. Тĕрĕс кăтарт» вăйă вылятать.	Ачасем ыйтусем çине хуравлаççĕ	Ыйтусем çине хуравлама вĕренни	Вĕрентекен информацине ăнланса кĕске хуравсем параççĕ.	Пĕр-пĕринпе ăнланса ĕçлени	Калаçăва ăнланмалла хутшăнаççĕ, каласа параççĕ. Предложенисе не калаççĕ, ăнланнине хусканусем туса палăртаççĕ	Урок проблемине палăртма пĕлни.
Вĕренӳ проблемине палартни Урок темин пĕлтерĕшне, проблемине хускатать (*Анне палăкĕ* мĕне пĕлтерет, эсир ăна ăçта курнă?)	**Çĕнĕ темăпа ĕçлени** *(Залив хĕрринче)*	Урок темин пĕлтерĕшне, проблемине хускатать (*Анне палăкĕ* мĕне пĕлтерет, эсир ăна ăçта курнă?). *Залив хĕрринче* сăмах майлашăвĕн пĕлтерĕшĕпе паллаштарать. Хăш сăмаха ăнланма пулнине тĕпчет. Çĕнĕ сăмахсемпе	*Анне палăкĕ* çинчен калаçаççĕ. Калаçура çĕнĕ сăмахсемпе пĕрле ăнланмалла сăмахсемпе усă курассипе паллаштарни (тĕсĕлхрен, велосипед, залив…): Эпĕ *Атăл хĕрринче* канатăп. Эпĕ *залив хĕрринче* те канатăп. Эпĕ *залив хĕрринче*	Ăнланма, калаçура хутшăнма вĕренни. Шупашкарти *Анне палăкĕ* паллă вырăнпа паллашни – ачасен тавра курăмĕсем анлăланни	Ыйтусем çине хуравлаççĕ, вĕрентекене ăнланнине кăтартаççĕ.	Предложени сене хусканусем хыççăн ăнкарма тăрăшни. Ыйту çине хуравлама вĕренни.	Чăваш чĕлхинчи пусăм (ударени) системипе усă курса пусăмсене тĕрĕс лартма хăнăхаççĕ.	пусăмсене тĕрĕс лартма хăнăхни, пусăм схемисемпе ĕçлеме вĕренесси.

		калаçура паллаштарать. Предложенисе не хусканусем туса каланине ăнланма хăнăхтарать. Çĕнĕ сăмахсемпе паллаштарать.	велосипедпа ярăнатăп. (велосипедпа ярăннă пек тăвать).					
Çĕнĕ темăпа ĕçлени	**Кĕнекере темăпа ĕçлени**	Сăмахсен сасă моделĕсемпе ĕçлеттерет.	Çĕнĕ сăмахсен сас моделĕпе ĕçлеççĕ.	Сас моделĕпе ĕçлеме вĕренни	Сăмах майлашăвĕсене пуплевре усă кураççĕ.	Сасăсене пăхăнса çĕнĕ сăмахсене тĕрĕс вуласси	Модельсем тăрăх сăмахсене шайлаштараççĕ.	Сасăсене уйăрма пултарни
			Ачасем кĕнекисене уçса урок темине вулаççĕ. Урокăн задачипе, кĕске планĕпе (кĕнеке тăрăх) паллашççĕ.	Урокра лартнă задачăна касса памалли тĕрлĕ меслетсем сĕнме вĕренесси	Калаçăва хутшăнма, çыхăнуллă тума пĕлни, итлекенсене ăнланмалла каласа пама тăрăшни.	Вăл ку ĕçе пурнăçлама пĕлÿсем кирлине «курма» вĕренни.	Пĕр-пĕрне тимлĕ итлеççĕ, вĕсен шухăшĕсемпе килĕшнине палăртаççĕ, килĕшмесен пулăшма хатĕр пулнине кăтартаççĕ.	Ĕçе пурнăçлама тытăниччен ачасем хăйсен пĕлĕвĕн шайне палăртма, пĕлекен сăмахсене шута илме вĕренни
	Кĕнекери «Рольпе выля» ĕçе пурнăçлани	Текстпа паллаштарать, текстра мĕнле рольсем пуррине палăртас ĕçе йĕркелет. Рольсем уйăрать: Тимур, Юман, Алина	Вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.	Ыйтусем çине хурав тупма вĕренни.	Уйăрнă рольсемпе выляççĕ.	Чăваш чĕлхине илтме, юратма вĕренни	Урок задачине ас туса, пăхăнса тăраççĕ, вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă кураççĕ.	Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курма вĕренни.
	4. Кĕнекери «Хуравла. Залив	Ÿкерчĕк тăрăх ачасене	Вĕрентекен ыйтăвĕсене	Ыйтусем çине хурав тупма	Мăшăрпа ĕçлеме	Мăшăрпа туслă,	Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă	Вĕрентекен каланине

	хĕрринче ачасем мĕн тăваççĕ?» ĕçе пурнăçлани	ыйтусем парать: *Залив хĕрринче Юман мĕн тăвать?* *Залив хĕрринче Юман тусĕ мĕн тăвать?* *Залив хĕрринче Юман тус хĕр ачи мĕн тăвать?*	хуравлаççĕ.	вĕренни	хăнăхни	ăнланса ĕçлеме вĕренни	курса хуравсем параççĕ.	итлеме пĕлни
	5. *«Ярăн»* вăйă выляни **&Ку вайă – хушса панă материал (вăхăт çитсен)**	Малтан хĕр ачасене, кайран арçын ачасене доска умне кăларать. Вĕсене ĕçсем хушать: *скейтпа ярăн, велосипедпа ярăн, роликпа ярăн, лашапа ярăн, машинпа ярăн.*	Доска умне тухнă ачасем вĕрентекен хушнине тăваççĕ. Ыттисем – «*тĕрĕс, тĕрĕс мар»* тесе вăййа хутшăнаççĕ.	*«Ярăн»* вăйăпа паллашни	Пĕри ыйтать, тепри хуравлать	Вăйă урлă калаçăва аталантарни	Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курса хуравсем параççĕ. Пĕрин хыççăн тепри ĕçлет.	Хушнă ĕçе пурнăçлани
	6. *Эсĕ залив хĕрринче мĕн тăватăн?* ыйтăва хуравлани **&Ку вайă – хушса панă материал (вăхăт çитсен)**	Ыйтусем парать. Сывлăх çинчен кĕскен каласа хăварать.	Вĕрентекен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.	*Эсĕ залив хĕрринче мĕн тăватăн?* ыйтăва хурав пама вĕренни	Çыхăнуллă каласа параççĕ.	Çыхăнуллă каласа пама вĕренни	Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курса хуравсем параççĕ.	Вĕрентекен тĕслĕхлĕ каланине итлеме пĕлни
	7. Кĕнекери «Диалога вула» ĕçе пурнăçлани	Диалога вулать, текстри ыйтусене парать *(***Ачасем ăçта?**	**В**ĕрентекенпе пĕрле вулаççĕ.	Ачасем вĕрентекен *ăçта? Юман мĕнпе ярăнать?*	Парта хушшинче мăшăрпа вулаççĕ.	мăшăрпа ĕçлеме пĕлни	Пĕрин хыççăн тепри ĕçлет	Иккĕн (пĕр-пĕрне итлеме, илтме вĕренсе) тĕслĕхсене пăхăнса калаçу

		Юман мĕнпе ярăнать? Алина мĕнпе ярăнать? Тимур ăçта каять? Велосипедпа кам ярăнать? Юман мĕнпе ярăнать? Роликпе кам ярăнать? Кам киле каять?)		ыйтусем çине хуравлани:				йĕркелеме пултарни
Хускану саманчĕ	**Ĕçе пĕлтерекен сăмахсене хусканусем туса кăтартни урлă ачасен сывлăхне упрасси**	Сăмахсене хусканусем туса кăтартать ***(Усă курмалли сăмахсем: апат çи, сик, чуп, иш, вĕç, лар, çыр, ӳкер, вула, шутла, тăр, уç, хуп, ташла, юрла, ĕçле, шакмакла выля, пĕçер, сут, вĕрент, тетте пуçтар, лавккана кай, чечек шăвар, уçăлса çӳре, çунашкапа ярăн, йĕлтĕрпе ярăн, яр, тура).***	Ачасем хусканусем тăваççĕ.	Ачасем хусканусем тăрăх сăмахсене ăнланни, аса илсе юлни	Вĕрентекенпе калаçăва хутшăнаççĕ.	Тимлĕн итлеме, калаçăва хутшăнма пĕлни	Доска умне хĕр ачасене тата арçын ачасене уйрăм кăларса ĕçлеттерни	Вĕрентекен каланине итлеме пĕлни, хусканусне сăнама пĕлни
V. Урок темипе	**Кĕнекери «Атьăр**	Юрра	Юрра итлеççĕ,	Евĕрлесе	Хусканусем	Юрă юрласа	Наушниксемпе,	Наушниксемпе,

малалла ĕçлени	**юрлатпар» ĕçе пурнăçлани**	итлеттерет, юрă тăрăх ыйтусемпе ĕçлеттерет. Лексика хăнăхăвĕсене аталантарать.	вулаççĕ, сăмахсене тĕрĕс калама тăрăшаççĕ.	калани	тăваççĕ.	фонетика, лексика, грамматика хăнăхăвĕсен е аталантарни	дискпа итлеме, илтме вĕренеççĕ, тĕслĕхсене пăхăнса калаçу йĕркелеме пултарни	дискпа итлеме, илтме вĕрененни, тĕслĕхсене пăхăнса калаçу йĕркелеме пĕлни
	2. «Вăл ăçта каять? Эс ăçта каятăн?» вăйă выляни	Инструктаж парать, вăйă йĕркелет.	Хăнăхтарура тĕл пулакан çĕнĕ мар сăмахсене ачасем хусканусем туса кăтартаççĕ. Ача доска умне тухать, ăçта та пулин кайнă пек хускану тăвать (Вадим, тĕслĕхрен, шкула кайнă пек тăвать, ачасен вăл ăçта кайнине тавçăрса илмелле).	Евĕрлесе калама пĕлни	Калаçăва хутшăнааççĕ, çыхăнуллă, итлекенсене ăнланмалла каласа пама тăрăшаççĕ.	Пĕр-пĕрне тимлĕ итлеме хăнăхни, вĕсен шухăшĕсем пе килĕшнине палăртма, килĕшмесен пулăшма хатĕр пулни	Пĕр-пĕрин тĕслĕхĕсемпе усă курса ĕçлеççĕ.	Вĕрентекен каланине итлеме пĕлни. Пĕр-пĕрин тĕслĕхĕсемпе усă курса ĕçлеме вĕренни.
	8. *«Эп ăçта каятăп? Пĕл»* вăйă выляни **&Ку вайă – хушса пана материал (вăхăт çитсен)**	Инструктаж парать, вăйă йĕркелет. Хăнăхтарура тĕл пулакан сăмахсене те хусканусем туса кăтартать: *шкула каятăп, киле каятăп, парка каятăп, вăрмана каятăп*.	«Эп ăçта каятăп? Пĕл» тенине ăнланма тăрăшаççĕ.	Çĕнĕ сăмахсене ăнланни, ас туса юлни	Хуравлас хăнăхусемпе ĕçлеççĕ. Пĕчĕк диалог тума тăрăшаççĕ.	Пĕри ыйтни, тепри хуравлани	Ачасем хусканусем тăрăх предложенисем йĕркелеççĕ.	Хушнă ĕçе пурнăçлама пĕлни
Рефлекси	**Урока пĕтĕмлетни,**	Вĕрентекен доска çине	Урокра мĕнле кăмăлпа	Урокра мĕнле ĕçленине кура	Йышăннă модельсемпе	Йышăннă модельсемп	Ачасем хăйсен ĕçне хаклаççĕ.	Кашни çыннăн хăйĕн умне

	ачасене çĕнĕ пĕлӳсемпе хавхалантарни	висĕ смайлик çыпăçтарать: 😊 ☹ 😐. *В ĕ р е н т е к е н .* Мана урок килĕшрĕ. (1-мĕш смайлик айне «+» паллă ӳкерет.) Кама урок килĕшрĕ? Тăрăр. (Ачасем тăраççĕ). Кашни смайлик пĕлтерĕшне ăнлантарать.	ĕçленине, хăй ĕçĕпе кăмăлллă пулнине палăртаççĕ.	ачасем хăйсен ĕçне хаклама пĕлни.	ĕçлеççĕ.	е усă курса шухăша кĕскен палăртма пĕлни		яланах мĕнле те пулин тĕллев лартмаллине ăнланни, хăйсен ĕçне хаклама пĕлни.
Урок вĕçлени	Сыв пуллашни	Ачасене сыв пуллашма вĕрентет, тепре курма хавас пулнине кăтартать.	Этикет сăмахĕсене аса илеççĕ.	Этикета пĕлни	Ачасем сыв пуллашаççĕ.	Чăвашла этикет сăмахĕсене пĕлни, этикета пăхăнни	Вĕрентекен тĕслĕхĕпе усă курса хуравсем параççĕ.	Вĕрентекен тĕслĕхлĕ каланине итлеме пĕлни